28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРЬ 19 ЭРНЕКУН 203 (6954) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Тĕнчери чи демократиллĕ суйлав системи

Паян «Правда» хаçатра СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Союз Советне тата Национальноçсен Советне суйламалли округсем тăвасси çинчен йышăннă Указ пичетленсе тухать.

Союз Советне суйлама—656 суйлав округĕ, Национальноçсен Советне суйлама 631 суйлав округĕ тăваççĕ. Кашни округран пĕр депутат суйлаççĕ. Округсем хисепне пĕтĕмпех «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» тăрăх тунă. Союз Советне суйламалли округ 300.000 çын пурăнакан территорие пĕтĕçтерсе тăрать. Национальноçсен Советне суйламалли округсене çакăн пек норма тăрăх тăваççĕ: кашни союзлă республикăра 25 округ, кашни автономиллĕ республикăра 11 округ, кашни автономиллĕ облаçра 5 округ, кашни национальллĕ округра пĕр округ пулать.

Совет Конституцийĕн чи паллă енĕ çакă пулса тăрать: вăл пурне те тивĕç, пĕртан та тÿрех суйламалли тата вăрттăн сасăламалли право парать кăна мар, çав правăна ССР Союзĕн кашни гражданинне пурнăçа кĕртме май туса парать. Пирĕн совет демократийĕ çак енĕпе палăрса тăрать те ĕнтĕ. Государство влаçĕн аслă органне суйламалли правăпа пирĕн Тăван çĕршывăн 18 çул тултарнă пур граждăнĕсем те,—мĕнле расăпа мĕнле наци çынни пулнине, арçын е хĕрарăм пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социальнăй сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕнле ĕçпе пурăннине пăхмасăр,—пурте усă курма пултараççĕ. Çакăнта ĕнтĕ СССР Конституцийĕн «ССР Союзĕнче пĕтĕм власть ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем урлă хулапа ял ĕççыннийĕсен аллинче тăрать» текен 3-мĕш статьи практикăра пурнăçа кĕрсе пыни палăрса тăрать.

Пирĕн çĕршывра социализм çĕнтернĕ никĕс çинче совет обществин мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ ÿссе çирĕпленчĕ. Çавăн пек пĕрлĕх историре халиччен пулман. Çав пĕрлĕх Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах уçăмлăн палăрчĕ. Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ тата чыслăхĕ умне хăрушлăх тухса тăрсан, пирĕн мĕнпур халăх—рабочи класс, колхоз хресченĕсем, интеллигенци—хамăрăн çулпуç тата полководец Сталин юлташ тавра пĕрлĕхлĕ çар лагерьне пĕтĕçсе тăчĕ. Çав лагерь фронтшăн, çĕнтерÿшĕн пурăнчĕ, ĕçлерĕ. СССР Верховный Советне малтанхи хут суйлас умĕн В. М. Молотов çапла каланăччĕ: «Мирлĕ пурнăçа килсе пăсас пулсан, йытă сăнчăртан вĕçерĕнсе пирĕн çине, пирĕн сурт çине сиксе ÿкес пулсан, çакна хирĕç эпир мĕн каланă пулăттăмăр-ха? Эпир çапла ответ панă пулăттăмăр: ан тив, тăшман социализмлă обществăн мораллĕ тата политикăллă пĕрлĕхĕн вăйне тутанса пăхтăр!» Тăшман çав хăватлă вăя тутанса пăхрĕ. Çав хăватлă вăй, гитлерла вăрă-хурахсене çапса аркатса, çĕр çинчен шăлса пăрахрĕ, хамăрăн Тăван çĕршыва тата Европа цивилизацине фашистла аркатуçăсенчен çăлса хăварчĕ. Тăван çĕршыва хÿтĕлессишĕн пынă пĕтĕм халăх кĕрешĕвне рабочи класс, хресченсем тата интеллигенци пĕр танах хутшăнчĕç. Вĕсем Тăван çĕршыв чапĕшĕн пынă кĕрешĕве хăйсен аллисен, хăйсен пуç миминпе чĕрисен пĕтĕм вăй-хăватне хучĕç, вĕсем чи аслă та чаплă çĕнтерÿ турĕç. Ун пек çĕнтерĕве этемлĕх обществин историйĕ халиччен курман. Çав паттăр кĕрешÿре воинсемпе ĕç паттăрĕсен, арçынсемпе хĕрарăмсен, ваттисемпе çамрăккисен вăйĕсем пĕрлешсе пĕтĕçрĕç.

Çакă пуриншĕн те паллă: гитлерла захватчиксем, Совет Союзне ултавлăн килсе тапăнма хатĕрленсе, хăйсен планĕсене çак ĕмĕтпе тунă: вĕсем пĕрре хытăрах килсе çапсанах рабочисемпе хресченсем хушшинче хирĕçÿсем пуçланĕç, совет обществи арканма тытăнĕ тата вăрçă тĕрĕслевне тÿссе тăраймĕ тесе шутланă. Пурнăç фашистла ухмахсемпе авантюристсенчен çав тери хыттăн мăшкăлласа кулчĕ. Вăрçă тĕрĕслевĕсем рабочисемпе хресченсен союзне, пирĕн обществăн пĕрлĕхĕпе çирĕплĕхне хавшатаймарĕç кăна мар, пачах та урăхла, тата ытларах тĕреклетрĕç.

Халăх хамăрăн тăван правительствăна аслă шанчăк хывса тăчĕ тата пĕр сăмахсăрах пулăшса тăчĕ. Çакă вăл пире çĕнтерÿ тума пулăшакан татăклă та тĕп май пулчĕ.

Совет демократийĕ мĕн тери анлă демократи пулнине уççăн кăтартакан тĕслĕхсенчен пĕри ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсен пĕртанлăхĕ пулса тăрать. Çав пĕртанлăх Национальноçсен Советне — государство влаçĕн аслă органĕн иккĕмĕш палатине суйламалли суйлав округĕсем организациленинче уçăмлăн палăрса тăрать. Кунта кашни национальноçть пĕр пек правăсемпе усă курать, кашни союзлă республика иккĕмĕш палатăна депутатсем пĕр пек хисеппе суйласа ярать. Çакă вăл ленинла-сталинла аслă та тĕрĕс наци политики, ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла туслăхне иксĕлми çирĕплетсе пĕтĕçтернĕ политика пурнăçа [illegible] пынине яр-уççăн кăтартса парать. Рабочисемпе хресченсен союзĕ пекех, çав [illegible] вăрçă вăхатĕнчи мĕнпур тĕрĕслеве чыслăн тÿссе ирттерчĕ. Вăрçă çав туслăха, çулăм хурçа хĕртсе туптанă пекех, хĕртсе туптарĕ. Аслă вырăс халăхĕн ывăлĕсемпе пĕрлех, украинецсем, белоруссем, грузинсем, казахсем, пирĕн вĕçĕ-хĕррисĕр аслă çĕршывра пурăнакан мĕнпур халăхсен ывăлĕсем Совет çĕршывĕшĕн паттăррăн кĕрешрĕç, тылра хĕрсе ĕçлерĕç. Вĕсен вăрçă хирĕнчи тата ĕçри паттăрлăхĕ ССР Союзĕнчи халăхсен пысăк патриотизмĕпе иксĕлми туслăхĕн аслă хăватне—пирĕн çĕнтерĕвĕн чи паха çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăракан хăвата уçăмлăн кăтартса пачĕ. Тулли те анлă пĕртанлăх прави,—çакă пулса тăрать ĕнтĕ çав туслăхăн тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем хăйсен аслă тăванне—аслă вырăс халăхне, Советлă Социализмлă Республикăсен нихăçан арканми хăватлă Союзне пĕрлештернĕскерне, пĕтĕм чун-чĕререн ыра кăмăлпа шанса тăнин никĕсĕ.

Сакăр çул каярах, СССР Верховный Советне малтанхи хут суйланă чухне, союзлă 11 республикăри халăхсем суйлава хутшăнчĕç. Паян суйлав округĕсен списокне вуланă чухне эпир унта 16 республика пуррине куратпăр. Малтанхи суйлавсем хыççăн туса хунă Карел-Финн, Молдаван, Литва, Латви тата Эстони Союзлă Республикисем хальхи суйлава хутшăнаççĕ. Вĕсенчен кашни мĕн чухлĕ халăх пурăннине кура Союз Советне депутатсен тивĕçлĕ хисепне суйласа ярать тата Национальноçсен Советне ытти союзлă республикăсемпе пĕртанах 25-шер депутат суйласа ярать. Çакăнта ĕнтĕ пирĕн суйлав системин чăн-чăн демократизмĕ палăрса тăрать, çакăнпа пĕрлех унта пирĕн аслă Тăван çĕршыв—Советлă Социализмлă Республикăсен хăватлă Союзĕ ÿссе тĕреклени, хамăр çĕршывра пурăнакан халăхсен туслăхĕпе тăванлăхĕ тата пĕрлĕхĕ çирĕпленни палăрса тăрать.

ССР Союзĕн çĕнĕ Конституцине, ăна тăваканăн ячĕпе халăх ăна Сталинла Конституци тесе ят панăскере, туса хатĕрленĕ чухне Сталин юлташ пирĕн суйлав системин никĕсĕсем çинчен çапла каланă:

«...çĕнĕ Конституци тăрăх, пурте пĕртан, тÿрех тата вăрттăн сасăласа суйлаççĕ...

Мĕншĕн пирĕн пурте суйлама пултараççĕ? Мĕншĕн тесен пирĕн пур граждансем те, суд тăрăх суйлав прависĕр хăварнисемсĕр пусне, пурте суйлама тата суйланма пултараççĕ.

Мĕншĕн пирĕн пурте пĕртан суйлама пултараççĕ? Мĕншĕн тесен пурлăх тĕлĕшĕнчен пурте пĕртан мар пулни те (халĕ çав танмарлăх кăштах пур-ха), мĕнле расăпа мĕнле наци çынни пулни те никама та уйрăмăн пысăка хума е кама та пулин хĕсме ирĕк памасть. Хĕрарăмсем активлă тата пассивлă суйлав правипе арçынсемпе пĕртанах усă кураççĕ. Пирĕн суйлавсем чăннипех те пĕртан суйлавсем пулаççĕ.

Мĕншĕн вăрттăн суйлавсем? Мĕншĕн тесен эпир совет çыннисене хăйсем суйлама шутланă çынсемшĕн, вĕсем хăйсен интересĕсене шанса панă çынсемшĕн пĕтĕмпех ирĕклĕн сасăлама май парасшăн.

Мĕншĕн тÿрех суйламалла пулать? Мĕншĕн тесен представительсен пур учрежденийĕсене те, верховный органсем таранах, вырăнсенчен тÿрех суйлани пирĕн вĕçĕхĕррисĕр çĕршыври ĕççыннисен интересĕсене лайăхрах тивĕçтерме май парать».

Çакă вăл пирĕн государствăн Тĕп Законĕ тăрăх туса хунă чăн-чăн демократи тата демократиллĕ правăсене халăхăн çÿлте тăракан темĕнле пĕр пайĕшĕн кăна мар, мĕнпур халăхшăн ĕçре пурнăçа кĕртнĕ чăн-чăн демократи пулса тăрать те ĕнтĕ. Çак енĕпе пирĕн совет демократийĕ, пирĕн суйлав системи уйрăмлăнах палăрса, малти вырăнта тăрать те ĕнтĕ.

СССР Верховный Советне суйламалли кун çитиччен вăхăт тăватă уйăхран сахалтарах юлчĕ. Халĕ пирĕн умра хамăрăн суйлав законне—«СССР Верховный Советне суйламалли Положение» мĕнпур ĕççыннисене ăнлантарса парас, кашни суйлавçăна унăн прависемпе тивĕçĕсем çинчен ăнлантарса парас задача тăрать. Çакă вăл хулапа ялти мĕнпур парти организацийĕсен массăллă-политикăллă ĕçĕн никĕсĕ, çакă вăл суйлав кампанине ăнăçлăн туса ирттермелли чи кирлĕ май пулса тăмалла. Суйлавччен вăхăт нумай-ха тесе, хамăра-хамăр лăплантарса ларни пулмалла мар, ăнлантару ĕçне халех тата май килнĕ таран анлăнрах сарса ямалла.

Пирĕн çĕршыв, çĕнтерÿ чапĕпе çуталса çĕкленнĕскер, большевиксен партийĕпе Совет правительстви тавра, халăхсен аслă çулпуçĕ, тĕнчери чи демократиллĕ Конституцие тăвакан Сталин юлташ тавра таччăн пĕтĕçсе тăнăскер, государство влаçĕн Аслă органне суйлама хатĕрленет. Çак суйлав совет демократийĕ çĕнтерсе чапа тухнине тата совет патриотизмĕн халиччен пулман вăйĕпе хăватне, пирĕн социализмлă обществăн аслă пĕрлĕхĕпе çирĕплĕхне çĕнĕрен çĕнĕрен татах та уççăнрах кăтартса парĕ.

(«Правда», октябрĕн 17-мĕшĕнчи умстатья).

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

Хĕрлĕ Çар фондне тырă тата çĕрулми параççĕ

ВĂРНАР, октябрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем государствăна обязательство тăрăх тырă парса татсанах, Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама тытăнчĕç. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, пурĕ 400 тонна тырă Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем илнĕ обязательствăна ку тĕлĕшпе те чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 800 пăт, «Победа» колхоз 825 пăт, Каганович ячĕпе тăракан колхоз 762 пăт, «Самолет» колхоз 1735 пăт, «Первое мая» колхоз 840 пăт, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1335 пăт, Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз 2400 пăт планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă панă. Паянхи кун тĕлне районĕпе 15.000 пăт ытла планран ирттерсе леçнĕ. Ку ĕç малалла та пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас тĕлĕшпе хăйсем илнĕ обязательствăна çак кунсенчех пурнăçласса шанса тăма пулать.

Районри колхозсем çĕрулми кăларса пĕтерчĕç. Çак кунсенчех государствăна çĕрулми парса тататпăр. Нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулми пама тытăнчĕç. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 600 пăт, «Первое мая» колхоз 1.500 пăт, «Самолет» колхоз 1.200 пăт çĕрулми Хĕрлĕ Çар фондне панă.

Государствăна тырпул, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăхлăхăн задачисене пурне те ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кашни колхозрах пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Я. ПЕТРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхоз государствăна тырă парса татнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне 1200 пăт тырă леçсе панă. Çак колхозпа ăмăртакан «Марс» колхоз 720 пăт леçнĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вăрлăх фончĕ тата выльăх-чĕрлĕх фончĕ валли тырă уйăрса çитернĕ. Колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх 4 килограма яхăн валеçме шутлаççĕ.

* * *

Чурачăк районĕнчи «Заря» колхоз государствăна çĕрулми памалли хăйĕн планне тултарнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне 42 центнер панă. «Красный восток» колхоз 34 центнер, «Правда» колхоз 20 центнер, районĕпе пурĕ 145 центнер çĕрулми планран ирттерсе панă. 20 колхоз государствăна çĕрулми парса татнă.

Районри колхозсем 1100 гектар çинчен çĕрулми кăларса пуçтарнă, 70 гектара яхăн юлнă-ха. Антавăшри Ленин ячĕпе тăракан, Сала ял Советĕнчи Буденный тата Сталин ячĕсемпе тăракан колхозсенче, Вăрманкассинчи «Новая сила» колхозра çĕрулми кăларса пĕтермен, государствăна çĕрулми парас енĕпе те çак колхозсемех юлса пыраççĕ.

Çĕршыв умĕнче парăмлă мар

КАЛИНИНО. Кĕнерти «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç пĕтĕмпех парса татрĕ. Планран ирттерсе 110 центнер çĕрулмипе пахчаçимĕç панă. Халĕ Хĕрлĕ Çар фондне тырă парать. Колхоз выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене те парса татнă. 1946 çулшăн 5 центнер аш-какай, 318 çăмарта, 10 килограмм çăм панă. Сĕт памалли хăйĕн обязательствине татса, килес çулшăн 882 литр панă хыççăн, колхоз 1096 литр государствăна сĕт сутнă.

Çавăн пекех «Красноармеец» колхоз та государствăна 720 литр, Услапари «Броневик» колхоз 1000 литр ытла планран ирттерсе сĕт сутнă.

Государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас тĕлĕшпе ытти колхозсем те ăнăçлă ĕçлеме пултараççĕ тата ĕçлемелле те. Тăван çĕршыв умĕнчи пур парăмсене те парса татас тесе, пикенерех кĕрешмелле, Октябрьти Социализмлă аслă революци 28 çул тултарнине пур парăмсене те парса татнипе кĕтсе илмелле.

Е. ВОЛКОВ.

1-мĕш бригада пек ĕçлемелле

ШĂХАСАН. «Заря» колхозри бригадăсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура яланах Отечественнăй вăрçă инвалиĕ П. Дмитриев ертсе пыракан 1-мĕш бригада малта пырать. Ку бригада государствăна тырă памалли плана сентябрь уйăхĕнчех тултарнă, ун хыççăн вара ытти бригадăсене пулăшма тытăннă.

Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне П. Дмитриев бригади хăйсен участокĕ çинчи çĕрулмие кăларса государствăна та парса татнă. Çавăн пекех 60 гектар кĕрхи çĕртме туса хăварнă. Халĕ вĕсем хĕрсех авăн çапаççĕ.

Анчах «Заря» колхозра юлса пыракан бригадăсем те пур. Сăмахран: 2-мĕш бригада (бригадирĕ П. Кириллов), 5-мĕш бригада (бригадирĕ О. Еремеева) пур ĕçсенче те кая юлса пыраççĕ. Вĕсем ку таранă çитсе те государствăна тырă парса татман, кантăр çапса майлас, авăн çапас тĕлĕшпе те юлса пыраççĕ. Ку бригадăсенче ĕçе тухман колхозниксем те пур.

«Заря» колхоз правленийĕпе Ял Совечĕн тата партипе комсомол организацийĕсен кая юлса пыракан бригадăсене тивĕçлĕн ертсе пымалла.

Ст. АСЛАН.

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă панă
1. Вăрнар	103,7
2. Муркаш	88,6
3. Етĕрне	87,8
4. Советски	87,3
5. Сĕнтĕр	85,6
6. Красноармейски	84,9
7. Шупашкар	84,6
8. Чурачăк	84,5
9. Çĕрпÿ	82,7
10. Сĕнтĕрвăрри	82,5
11. Шăхасан	82,4
12. Вăрмар	79,4
13. Пăрачкав	79,0
14. Элĕк	78,2
15. Калинино	77,2
16. Елчĕк	76,4
17. Куславкка	74,2
18. Йĕпреç	73,5
19. Октябрьски	72,7
20. Ишлей	71,3
21. Первомайски	70,1
22. Чкаловски	68,7
23. Канаш	68,6
24. Комсомольски	68,3
25. Улатăр	65,3
26. Çĕмĕрле	63,4
27. Хĕрлĕ Чутай	63,0
28. Тăвай	61,5
29. Шăмăршă	56,7
30. Кувакино	44,2

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВĂН ÇАПАС, ÇĔРУЛМИ КĂЛАРАС ТАТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă	Кĕрхи çĕртме тунă
Улатăр	65,2	1,5	26,4
Элĕк	80,9	97,6	41,4
Вăрнар	79,5	97,1	69,7
Йĕпреç	78,2	70,1	37,0
Ишлей	74,7	94,6	53,1
Калинино	78,8	94,0	52,5
Канаш	75,7	64,3	33,0
Куславкка	78,1	67,5	57,5
Комсомольски	69,8	98,1	32,4
Красноармейски	75,8	100,0	65,2
Хĕрлĕ Чутай	67,9	95,9	33,3
Кувакино	70,0	61,3	21,0
Сĕнтĕрвăрри	68,7	73,7	57,6
Муркаш	72,3	79,2	39,3
Октябрьски	80,8	75,4	61,5
Первомайски	77,9	100,0	50,1
Пăрачкав	62,8	44;1	20;4
Советски	64,5	89,3	34,0
Сĕнтĕр	73,5	83;4	62,5
Вăрмар	75,9	85,3	63;2
Çĕрпÿ	82,5	92,3	80,2
Шупашкар	81,2	75;6	55;1
Чкаловски	73,7	100,0	43,7
Чурачăк	75,1	98;1	63;1
Шăмăршă	90,5	100,0	33,7
Шăхасан	74,1	92;3	60,0
Çĕмĕрле	67,8	68,7	30,0
Етĕрне	59,4	88;3	51;2
Елчĕк	73,7	100,0	53,8
Тăвай	75,5	76;8	33;2

Асăрхаттарни: Улатăр районĕ тăрăх октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне илнĕ даннăйсене кăтартнă.

Союз Советне суйламалли суйлав округĕсем çинчен

СССР Конституцийĕн 34-мĕш статьи тăрăх тата «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 24-мĕшпе 26-мĕш статьисем тăрăх, СССР Верховный Совет Президиумĕ кăçалхи октябрĕн 16-мĕшĕнче йышăннă Указпа Союз Советне суйлама 656 суйлав округĕ тунă.

Вăл шутра:

ЧĂВАШ АССР-ĕнче

371-мĕш Шупашкар суйлав округĕ (центрĕ—Шупашкар хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Шупашкар хули тата çак районсем: Шупашкар, Сĕнтĕр, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ, Октябрьски тата Красноармейски районсем (ку юлашки районран çак ял Совечĕсем кĕреççĕ: Мăн Шетмĕ, Итмар, Именкасси, Исаково, Хурăн Карай, Мартынкасси, Типçырма, Пшонкă, Çавалçырма, Чатукасси, Шурçырма, Шупуç, Хусакасси, Яманак ял Совечĕсем).

372-мĕш Канаш суйлав округĕ (центрĕ—Канаш хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Канаш хули тата çак районсем: Канаш, Куславкка, Вăрмар, Тăвай, Елчĕк, Шăхасан, Чурачăк тата Красноармейски районсем (ку юлашки районран çак ял Совечĕсем кĕреççĕ: Супар, Алманчă, Турхан Упи, Кушар, Тĕрер, Упи, Янкас, Янайкасси ял Совечĕсем).

373-мĕш Улатăр суйлав округĕ (центрĕ—Улатăр хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Улатăр хули тата çак районсем: Улатăр, Шăмăршă, Йĕпреç, Первомайски, Чкаловски, Кувакино, Комсомольски тата Пăрачкав районĕсем (ку юлашки районран çак ял Совечĕсем кĕреççĕ: Пĕррелмĕш Анастасово, Иккĕмĕш Анастасово, Антипино, Бахмутово, Висяга, Вознесенское, Дурасовка, Мочкасси, Милютино, Напольное, Низовка, Пикулино, Полибино, Семеново, Студенец ял Совечĕсем).

374-мĕш Çĕмĕрле суйлав округĕ (центрĕ—Çĕмĕрле хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Çĕмĕрле, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк, Етĕрне, Калинино, Советски, Муркаш тата Пăрачкав районĕсем (ку юлашки районран çак ял Совечĕсем кĕреççĕ: Пăрачкав, Гарт, Кожевенное, Кудеиха, Никольское, Козловка, Ряпино, Сиява, Шадриха ял Совечĕсем).

Национальноçсен Советне суйламалли суйлав округĕсем çинчен

СССР Конституцийĕн 35-мĕш статьи тăрăх тата «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 25-мĕшпе 26-мĕш статьисем тăрăх, СССР Верховный Совет Президиумĕ кăçалхи октябрĕн 16-мĕшĕнче йышăннă Указпа Национальноçсен Советне суйлама 631 суйлав округĕ тунă.

Вăл шутра:

ЧĂВАШ АССР-ĕнче

555-мĕш Шупашкар суйлав округĕ (центрĕ—Шупашкар хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Шупашкар хули тата Сĕнтĕрпе Ишлей районĕсем.

556-мĕш Шупашкар ял суйлав округĕ (центрĕ—Шупашкар хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски районсем.

557-мĕш Çĕрпÿ суйлав округĕ (центрĕ—Çĕрпÿ хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Çĕрпÿ, Красноармейски, Чурачăк, Шăхасан районĕсем (ку юлашки районран çак ял Совечĕсем кĕреççĕ: Матшу, Уйкас Кипек, Энтриял, Енĕш, Анатри Сурăм тата Вăрманкас Енĕш ял Совечĕсем).

558-мĕш Вăрмар суйлав округĕ (центрĕ—Вăрмар ялĕ).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Вăрмар, Куславкка тата Тăвай районĕсем (ку юлашки районран çак ял Совечĕсем кĕреççĕ: Элпуç, Сăкăтпуç, Çĕн Пуянкасси, Тушкил ял Совечĕсем).

559-мĕш Канаш суйлав округĕ (центрĕ—Канаш хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Канаш хули тата Канашпа Тăвай районĕсем (ку юлашки районран çак ял Совечĕсем кĕреççĕ: Тăвай, Амалăх, Кĕрше, Чÿк-Çырми, Çĕн Çырма, Йăнтăрч, Кармал, Кичĕ, Мучар, Çĕнĕ Ишинă, Вырăс-Нăрваш, Çăлкуç, Тăрмăш, Тĕмер, Чутей, Енишик-Нăрваш ял Совечĕсем), Шăхасан районĕнчи Шăхасан, Атнаш, Ăвăспÿрт-Кипеч, Анатри Вăрманъял, Çĕнĕ Мами, Çĕнĕ Чулкасси, Ушанар, Кив Саръял, Туçи Çармăс, Ухман, Чулкăмака, Шĕкĕр, Чарпуç ял Совечĕсем.

560-мĕш Йĕпреç суйлав округĕ (центрĕ—Йĕпреç поселокĕ).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Йĕпреç, Шăмăршă, Первомайски районсем.

561-мĕш Чкаловски суйлав округĕ (центрĕ—Патăръел).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Чкаловски, Елчĕк, Комсомольски районсем.

562-мĕш Улатăр суйлав округĕ (центрĕ—Улатăр хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Улатăр хули тата Улатăрпа Кувакино районĕсем.

563-мĕш Вăрнар суйлав округĕ (центрĕ—Вăрнар поселокĕ).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Элĕк, Вăрнар тата Калинино районĕсем.

564-мĕш Çĕмĕрле суйлав округĕ (центрĕ—Çĕмĕрле хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Çĕмĕрле, Пăрачкав тата Хĕрлĕ Чутай районĕсем.

565-мĕш Етĕрне суйлав округĕ (центрĕ—Етĕрне хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Етĕрне, Муркаш тата Советски районсем.

* * *

СССР Конституцийĕн 35-мĕш статьи тăрăх тата «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 25-мĕшпе 26-мĕш статьисем тăрăх, СССР Верховный Совет Президиумĕ кăçалхи октябрĕн 16-мĕшĕнче йышăннă Указпа Национальноçсен Советне суйлама 631 суйлав округĕ тунă.

Вăл шутра:

Р С Ф С Р

15-мĕш Горький суйлав округĕ (центрĕ—Горький хули).

Ку округа çаксем кĕреççĕ: Горький облаçĕ тата Чăваш АССР-ĕ.

Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулма ВЦСПС-ран кандидат тăратни

Октябрĕн 16-мĕшĕнче ВЦСПС Президиумĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура профсоюзсен Центральный Комитечĕсен председателĕсем те пулнă. Лару СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулма ВЦСПС-ран кандидат тăратас ыйтăва сÿтсе-явнă.

Ку ыйтупа ВЦСПС секретарĕ Сидоренко юлташ сăмах тухса каланă. Вăл СССР Верховный Советне суйласси çав тери пысăк ĕç пулса тăнине палăртнă. — СССР Конституцийĕнче тата СССР Верховный Советне суйламалли Положенин 36-мĕш статьинче каланă тăрăх, профсоюзсем суйлав комиссийĕсене хăйсен представителĕсене яма пултараççĕ,—тенĕ Сидоренко юлташ.—Эпир паян кунта СССР Верховный Совечĕн иккĕмĕш суйлавне ирттермелли Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулма ВЦСПС-ран кандидат тăратма пухăнтăмăр.

ВЦСПС секретарĕ Соловьев юлташ Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмашкăн ВЦСПС-ран В. В. Кузнецов юлташа кандидата тăратма сĕннĕ.

Ларăва пухăннă çынсем пурте çак сĕнĕве пĕр кăмăллă пулса йышăннă.

ВЦСПС Президиумĕ СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулмашкăн ВЦСПС-ран ВЦСПС Председательне Василий Васильевич Кузнецов юлташа кандидата тăратма йышăннă. (ТАСС).

Мускаври коммунистсен организацийĕ Г. М. Попов юлташа кандидата тăратнă

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Мускав комитечĕ «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» тăрăх туса хумалли Тĕп суйлав комиссийĕн членĕ пулма кандидат тăратасси çинчен сÿтсе-явнă. Вара Мускаври коммунистсен организацийĕнчен Георгий Михайлович Попов юлташа кандидата тăратма йышăннă. Попов юлташ —Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Мускав область комитечĕн тата Мускав хула комитечĕн секретарĕ, ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн Исполкомĕн Председателĕ пулса ĕçлет. (ТАСС).

СУЙЛАВА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Шупашкар хулинчи предприятисемпе учрежденисенче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» вĕренес ĕç пысăк çĕкленÿпе пулса пырать. Якунин юлташ главный инженер пулса ĕçлекен заводри парторганизаци ку тĕлĕшпе нумаях пулмасть агитаторсен тата цехсенчи парторганизаци секретарĕсен канашлăвне ирттерчĕ. Канашлура «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» рабочисене ăнлантарса парасси çинчен сÿтсе-яврĕç.

Халĕ заводри пур цехсемпе участоксенче те «Положение» ăнлантарас ĕç пуçланчĕ. Уйрăмăнах ку ĕç штамповочнăй цехра (парторганизаци секретарĕ Давыдов) тата конструкторсен пайĕнче (парторганизаци секретарĕ Кулыгин) лайăх пулса пырать. Кунта агитаторсем «Положенин» кашни сыпăкĕпе статьине рабочисене тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Н. ВОЛКОВ.

Финанс планне тултарассишĕн лайăхрах ĕçлемелле

ЕТĔРНЕ. Район укçа-тенкĕ пухас плана уйăхран уйăха, кварталтан квартала тултарса пымасть. III-мĕш квартал планне те район 66,5 процент кăна тултарнă. Уйрăмах районра Мучар, Етĕрне, Ирçе ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе япăх ĕçлессĕ. Вĕсем III-мĕш квартал планне мĕнпурĕ те 30—40 процент çеç тултарнă. Çак ял Совечĕсем юлса пыни пĕтĕмпех ял Совечĕсемпе финанс работникĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре активпа çителĕксĕр çыхăнса ĕçленинчен, колхозниксен анлă масси хушшинче ăнлантару ĕçне кирлĕ пек туса пыманнинчен килет. Асăннă ял Совечĕсен исполкомĕсем (председателĕсем Соловьев, Петров тата Шестеркина) кăçал укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пыни çинчен ял Совет исполкомĕн ларăвĕсемпе канашлусенче пĕрре те сӳтсе-явман. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе ĕçлекенсене отчетсем тутармаççĕ, вĕсен ĕçри çитменлĕхĕсемпе интересленмеççĕ. Ял Совет исполкомĕсен ларăвĕсенче нумай чухне ку ыйтăва государство умĕнчи парăмсене парса татас ыйтусемпе çыхăнтараççĕ. Уйрăмăн сӳтсе-явса ялти актива укçа-тенкĕ планне вăхăтра пурнăçлама мобилизацилени çук.

Чылай ял Совечĕсенче заем укçине пухас ĕç япăх тăрать. Ял Совет председателĕсем заем укçине колхоз председателĕсем пухса параса шанса лараççĕ. Паллах, заем укçине пухассишĕн колхоз председателĕсем те ответлă ĕнтĕ. Анчах çав хушăрах ял Совет председателĕсем хăйсен заем уполномоченнăйĕсемпе пачах та ĕçлемеççĕ. Кăташ ял Советĕнчи колхозсенче заем уполномоченнăйĕсем сахаллăн шутланаççĕ. Вĕсем юлашки виçĕ уйăх хушшинче заем укçине пĕр пус та пухман. Ижеева, Петров, Иванова заем уполномоченнăйĕсем ĕçлеме пуçланăранпа та заем укçине нимĕн чухлĕ те пухман.

Кăташ ял Советĕнче финанс планне вăхăтра тултарас ĕçре хăшпĕр активистсем хăйсем чăрмантарса пыраççĕ. Ял Советĕнчи актив 23 çынран тăрать. Вĕсем паянхи куна государствăна 26.355 тенкĕ парса татман. Самообложенипе заем укçине шутласан, ку цифра татах та ӳсет. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Кондратьевпа унăн заместителĕ Романов ку тарана çитсе те ялхуçалăх налогĕпе страховка укçисене тӳлесе татман. К. Иванова, Л. Федорова, А. Белов, Е. Соловьева бригадирсен те кашниннех государствăна пĕр пинтен кая мар тӳлемелле. Алексеевкăри «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз председателĕ, вăлах ял Совет председателĕн заместителĕ П. Гаврилов юлташ паянхи куна çитсе те 562 тенкĕ ялхуçалăх налогне тӳлесе татман. Ку колхозри ферма заведующийĕн (вăлах тата ял Совет исполкомĕн депутачĕ) М. Федорова юлташăн 2.100 тенкĕ ялхуçалăх налогĕ тӳлемелле. Кун пек тĕслĕхсем районра татах та нумай.

Районри финанс пайĕпе унăн заведующийĕ Кочергина юлташ район укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе юлса пынишĕн нимĕн чухлĕ те пăшăрханмаççĕ, районри финанс работникĕсен ĕçне вăхăтра тĕрĕслесе пымаççĕ.

Районра укçа-тенкĕ пухас ĕçе тивĕçлипе йĕркеленĕ ял Совечĕсем те пур. Кĕçĕн Чураш, Чаканар, Стрелецки ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе ытти ял Совечĕсемшĕн пример пулса тăраççĕ. Мăн Шемерден ял Совет председателĕ Самойловăпа финагент Грибова юлташсем ĕçе тĕрĕс организациленĕ. Ялти пĕтĕм актива çак ĕçе тума явăçтарнипе пула ку ял Совечĕ III-мĕш квартал планне 118 процент тултарчĕ. Халĕ ял Совечĕ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, IV-мĕш квартал планне ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне 75 процент тултарма обязательство илчĕ. Анчах районри финанс пайĕ Мăн Шемерден ял Совечĕн паха ĕç опычĕсене кая юлса пыракан ял Совечĕсем хушшинче сарса пыма тата вĕсене ĕçлеме вĕрентме сахал тăрăшать

Ник. ЦВЕТКОВ.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ

КӲКЕÇ. Район укçа-тенкĕ пухмалли III-мĕш квартал планне пурĕ те 55 процент çеç тултарнă. Октябрь уйăхĕн малтанхи 10 кунĕ хушшинче IV-мĕш квартал планне пурĕ те 6 процент çеç тултарнă.

Уйрăмăнах укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Алькеш ял Совечĕ, «Чăваш Коммуни» тата «1-ое Мая» колхозсем кая юлса пыраççĕ. Алькеш ял Совечĕ паянхи куна государствăна 248.000 тенкĕ, «Чăваш Коммуни» колхоз 47.000 тенкĕ, «1-ое мая» колхоз 22.000 тенкĕ парса татман.

Кунта нумаях пулмасть районри финанс работникĕсемпе ял Совет председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу Çĕрпӳпе Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи финанс работникĕсен пуçарăвне ырласа Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма, IV-мĕш кварталти финанс планне ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарма обязательство илчĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Депо хĕле хатĕр

КАНАШ. (Телефонпа). Депо коллективĕ хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕ. Депори мĕнпур станоксене тата пăспа ăшăтакан системăна тĕпрен юсанă. Анă шывпа çăвакан насоспа мотора пĕр чăрăнмасăр ĕçлемелле тунă.

Депо çурчĕн алăкĕсене, урайĕсене тата мăрийĕсене юсанă, сурт тăррине çирĕплетнĕ.

Депора паровозсене хĕле хатĕрлесе çитерес ĕçсем те пысăк хăвăртлăхпа пулса пыраççĕ. Паровозсене сивĕ кĕмелле мар туса ăшăтнă, 7 паровоз хĕле пур енчен те хатĕрленсе çитнине пĕлтерекен паспорт илнĕ. Паровозсене хĕле хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе уйрăмăнах Доронин машинист лайăх ĕçлерĕ, вăл хĕле хатĕрленсе çитнине пĕлтерекен паспорта депора чи малтан илчĕ. Çавăн пекех Хусан чугун çулĕ çинчи паллă машинист орденоносец Николаев та хĕле пур енчен те хатĕрленсе çитсе паспорт илчĕ.

Депо коллективĕ кăмрăк йăтакан крансен хуçалăхне те хĕле хатĕрлесе çитернĕ. 3 кранĕ те хĕле хатĕрленсе çитнине пĕлтерекен паспорт илнĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕрсем те хĕле пур енчен те хатĕр. Паровоз бригадисен дежурнăй пӳлĕмне штукатурка тунă, тăррине çĕнĕрен витнĕ.

П. СИМОНОВ.

Ял Совет исполкомĕ шкул ĕçĕпе интересленмест

ЭЛĔК. Сурăмпуç Шĕмшешри çичĕ çул вĕренмелли шкул вĕренӳ çулне хатĕрленмесĕр кĕтсе илчĕ. Ял Совет исполкомĕ шкул ĕçĕпе пачах та интересленмест. Халĕ шкулăн пĕр кубометр вутă та çук. Çавна пула чылай ачасем шкула çӳреме пăрахрĕç: 5-мĕш класа 17 ача çӳремелле пулсан, пурĕ те 5 ача кăна вĕренме çӳрет.

Ф. КАЧЕЕВ.

Парти пурнăçĕ

Коммунистсем—колхоз производствине ертсе пыракансем

ИШЛЕЙ. Сыпайкасси ял Советĕнчи партин территориллĕ пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Я. Смирнов юлташ) пурĕ 4 колхозри коммунистсене пĕрлештерсе тăрать. Парторганизацинче 9 коммунист. Коммунистсем колхозсенче пурте тенĕ пекех ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. В. Шишкин «Труд» колхоз председателĕ, Н. Кульков «Ыраш» колхоз председателĕ, Я. Смирнов Свердлов ячĕпе тăракан колхоз кладовщикĕ, А. Бычков «Ыраш» колхозри уйхир бригадин бригадирĕ, В. Смелов ял Совет исполкомĕн председателĕ пулса ĕçлеççĕ.

Парторганизаци хăйĕн ĕçне план тăрăх туса пырать. Хăйĕн пухăвĕсенче вăл час-часах колхоз председателĕсемпе бригадирсен ĕçĕсем çинчен сӳтсе-явса, кирлĕ кăтартусем парса хăварать. Коммунистсем колхозниксемпе единоличниксем хушшинчи политмассăллă ĕçе тивĕçлипех йĕркеленĕ. Агитколлектива пуçламĕш шкулти учительница П. Щукина коммунистка ертсе пырать. Агитколлектив членĕсем пурте коммунистсемпе комсомолецсем.

Партин территориллĕ пуçламĕш организацийĕ колхозсене кирлĕ пек пулăшса ертсе пынине пула, ял Советне кĕрекен Свердлов ячĕпе тăракан, «Труд», «Ыраш» тата «Вускасси» колхозсем районра пур ĕçре те малта пыраççĕ. Акă, Свердлов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Зайцев юлташ) сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлнех аван çапса пĕтерчĕ. Колхоз государствăна тырă парас плана тултарнă.

Кунта государствăна тырă леçес тĕлĕшпе ĕçлекен транспорт бригадине 60 çулти колхозник Окунев ертсе пырать. Унăн бригадинчи 60 çулти колхозник Грибов Заготзерно пунктне 210 пăт, Р. Палкина колхозница 540 пăт тырă леçнĕ.

Государствăна пама чи таса та паха тырра хатĕрлес ĕçе кунта парторганизаци секретарĕ Я. Смирнов хăй ертсе пырать. Вăл пуçарнипе колхозниксем Заготзерно пунктне леçекен тырра лайăх тасатса типĕтес ĕçе организациленĕ.

Свердлов ячĕпе тăракан колхоз тĕштырăсене 16 ĕçкунĕнче, планран пăхнинчен 4 кун маларах вырса пустарчĕ. Колхозниксем хушшинчи политмассăллă ĕçе лайăх йĕркеленине пула, кунта ĕçе тухман пĕр колхозник та çук. Аван çапас тĕлĕшпе уйрăмăнах 62 çулти колхозник, опытлă машиновед Ф. Палкин пысăк пултарулăхпа ĕçлерĕ. Вăл норма тăрăх 30 центнер тырă çапас вырăнне кулленех 70-шер центнер тырă çапса пычĕ. Пĕрремĕш çул кăна ĕçлекен машиновед Н. Белов кулленех 45—50-шар центнер тырă çапрĕ.

Парторганизаци Хĕрлĕ Çартан таврăннă воинсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе те ĕçлет. Акă, Хĕрлĕ Çартан таврăннă Г. Сорокина ферма заведующийĕ пулма, А. Сорокина бригадирта ĕçлеме лартнă.

Çавăн пекех ял Советне кĕрекен «Ыраш», «Труд», «Вускасси» колхозсем те районра лайăх ĕçленипе палăрса тăраççĕ. «Ыраш» колхоз (председателĕ Н. Кульков юлташ) государствăна тырă парас плана сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлнех тултарчĕ. Халĕ кунта çитес çулшăн тырă пама тытăннă. Ку колхозри А. Бычков коммунист ертсе пыракан бригада колхозра пур тĕрлĕ ĕçсенче те малта пырать.

Н. КОНДАКОВ.

ПУР ĔÇЕ ТЕ ВĂХĂТРА ТУСА ПЫРАКАН КОЛХОЗРА

Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхоз ăна Отечественнăй вăрçă инваличĕ Васильев юлташ ертсе пыма тытăнсан малта пыракан колхозсен шутне кĕнĕ.

Васильев юлташ 1943 çулта колхоз председателĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене çулран-çулах вăхăтра туса пынă. Кăçал çураки ĕçĕсене план тăрăх 8 кун хушшинче туса ирттерме пăхнă пулсан, колхоз 7 кун хушшинче туса пĕтернĕ.

Тырпул пухса кĕртес, аван çапас, государствăна тырă тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене парас ĕçсем колхозра ăнăçлă пулса пычĕç. Ыраша 6 кунра, çуртырине 15 кун хушшинче, сентябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ. Колхозра ĕçлеме пултаракансем пурте тырпул пухса кĕртес ĕçе хутшăннă тата ĕç нормине ытлашшипех тултарса пынă.

Тырă вырма тухнă хыççăн малтанхи кунсенчех колхоз аван çапма пуçланă. Колхозăн хăйĕн молотилка пур, вăл пĕчĕк двигатель вăйĕпе ĕçлет. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна 433 центнер тырă парса, колхоз хăйĕн обязательстине срокчен тултарнă тата плапран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 55 центнер тырă панă.

Ытти ĕçсем те кунта ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Кĕрхи сĕртме туса пĕтернĕ. Сентябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне колхоз государствăна сĕрулми памалли плана пурнăçланă. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене те пĕтĕмпех парса татнă.

— Государство умĕнче пирĕн нимĕнле парăм та çук,—тет колхоз председателĕ Васильев юлташ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те колхоз малтисен ретĕнче тăрать. Лашасемпе ĕнесен тата ытти выльăхсен хисепĕ планпа пăхнинчен ытларах. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленсе, выльăх витисемпе картисене юсанă, чӳречесем лартнă, вите ăшĕсене шуратса тухнă.

Ферма заведующийĕ пулса кунта Отечественнăй вăрçă инваличĕ Павлов юлташ ĕçлет. Хăйĕн ĕçне тăрăшса тата лайăх туса пынăшăн ăна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Колхоз пахчаçимĕç тата унăн вăрлăхне туса илес тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлет. Кăçал кунта 20 гектар тĕрлĕ пахчаçимĕç лартса тунă: хăяр, помидор, кишĕр тата ытти те. Помидор сутнипех колхоз 60 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Колхозра çĕрулми уйрăмăнах тухăçлă пулнă. Гектар пуçне 900 пăт çĕрулми тухать. Халĕ ĕçкунĕ çине 5-шер килограмм çĕрулми валеçнĕ те ĕнтĕ. Пахчаçимĕç тăвас тĕлĕшпе колхозра уйрăм бригада ĕçлет, бригадăна ВКП(б) членĕн кандидачĕ Илларионов юлташ ертсе пырать.

Колхозниксем кунта пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ĕçкунĕсен минимумне пурте ирттерсе тултарнă. Отечественнăй вăрçăран таврăннă çынсем тата фронтовиксен çемьисем ĕçре пример кăтартса пыраççĕ. Отечественнăй вăрçă инваличĕ Шангов Николай октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 289 ĕçкунĕ тунă. Ольга Нестерова (унăн упăшки фронтра вилнĕ) 300 ĕçкунĕ, Анна Банова 280 ĕçкунĕ тунă. Колхозниксем çакăн пек тăрăшса ĕçленине пула колхоз пур ĕçсене те вăхăтра туса пынă, çак кунсенчех колхоз аван çапас ĕçе те вĕçлет.

Вăрçă вăхăтĕнче колхоз ĕçкунĕсем тăрăх тырă валеçмесĕр пĕр çул та ирттермен. Кăçал та ĕçкунĕ çине 1,5 килограмран кая мар тырă валеçме шутлаççĕ.

Колхоз фронтовиксемпе вĕсен çемьисене пулăшассине те манмасть. Фронтовике Антонова, фронтовик арăмне З. Алексеевăна çурт лартса панă. Çавăн пекех Отечественнăй вăрçă инвалидне Орлов юлташа çурт лартма пура илсе панă.

Артель хуçалăхĕ аталанса пырасси ертсе пыма пĕлнинчен нумай килет. Колхоз председателĕ Васильев юлташ колхоз ĕçне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса туса пырать. Колхоз активне ӳстерсе пырать, пур колхозниксене те ĕçе хутшăнтарать.

Совет Союзĕн Правительстви колхоз председательне Васильев юлташа «За трудовую доблесть» медальпе наградăланă.

— Манăн пĕчĕк ĕçе Правительство пысăка хурса хаклани,—тет Васильев юлташ.—ĕçлес кăмăла ӳстерет, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать

И. САЛАМБЕК.

Шуркасси, Сĕнтĕрвăрри районĕ.

Англипе Совет Союзĕнчи çамрăксен туслăх комитечĕн ларăвĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Англипе Совет Союзĕнчи çамрăксен туслăх комитечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва парламент членĕ Плэттс Миллс председатель пулса ертсе пынă. Совет çамрăкĕсенчен ларура çак представительсем пулнă: Иванов, Шевцов, Пушнов, Чечеткина тата ыттисем те. Вĕсем Лондона пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцине пухма хатĕрленекен комитетра ĕçлеме пынă. Англи çамрăкĕсенчен машиностроительсен, государство служащисен ассоциацийĕнчи, студентсен юхăмĕнчи, Лондон графствин советĕнчи, служащисен ассоциацийĕнчи, студентсен папи союзĕнчи, лейбористсен партийĕн университет федерацийĕнчи çамрăксен секцийĕсем, комсомол тата ытти организацисем суйласа янă делегатсем пулнă.

Совет делегацийĕ Совет Союзĕнчи çамрăксен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕ ячĕпе Совет Союзне Англири çамрăксен делегацине яма сĕннĕ. Çамрăксен туслăх комитечĕн представителĕсене—парламент членне Плэттс Миллса тата комитет секретарьне Гитермэна та Совет Союзне пырса курма чĕннĕ. Комитет ларăвне пынă Англи çамрăкĕсен делегачĕсем совет делегацине ыра чĕнӳшĕн ăшшăн тав тунă.

ВИЛНĔ БОЕЦСЕН ЯЧĔПЕ ЮГОСЛАВИРЕ ПАМЯТНИК ТУНА

БЕЛГРАД, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио пĕлтернĕ тăрăх, Белград çывăхĕнчи Сланц ятлă ялта Хĕрлĕ Çарпа Югослави çарĕн вилнĕ боецĕсен ячĕпе памятник уçнă. Памятник уçнă çĕре Совет Союзĕн Югославири посолĕ Садчиков юлташ, Югослави çарĕн, халăх фрончĕн тата хĕрарăмсен фашизма хирĕçле фрончĕн представителĕсем пынă.

Памятник уçнă чухне Симович священник сăмах тухса каланă. Вăл Югослави халăхĕсем ирĕклĕхшĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа панă. Çĕнтерӳ тăвас ĕçре Совет Союзĕпе Хĕрлĕ Çар çав тери паллă вырăн йышăнса тăнине уйрăмах палăртса, Симович священник çапла каланă: вилнĕ геройсем вырăс халăхĕн тăванла çĕрĕ çинче выртаççĕ. Вĕсен виллисене лайăх пăхса усрассишĕн Югослави халăхĕ тăрăшать. Çавăн çинчен эпĕ вилнĕ боецсен тăванĕсене каласа пама ыйтатăп, тенĕ Симович священник.

Унтан Садчиков юлташ сăмах каланă. Вăл славян халăхĕсем хушшинчи туслăх çирĕпленсе пынине палăртнă.

Памятнике уçнă хыççăн Садчиков посол Сланц ялĕнчи хресченсем тунă апатлануря пулнă.

ЮГОСЛАВИЕ НИМĔÇ ЗАХВАТЧИКĔСЕНЧЕН ИРĔКЕ КĂЛАРНИ ÇУЛТАЛĂК ТУЛТАРНĂ ЯТПА ПУЛСА ИРТНĔ МИТИНГСЕМПЕ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ

БЕЛГРАД, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Младеновац, Лесковац, Ниш, Обреновац тата Крушевац хулисенче çак хуласене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларни çулталăк тултарнă ятпа митингсемпе демонстрацисем пулса иртнĕ. Митингсенче тухса каланă ораторсем Югослави халăхне гитлерла захватчиксене хирĕç кĕрешме пулăшнă мухтавлă Хĕрлĕ Çара тав тунă. Вĕсем Югослави халăхĕсене Тито маршал ертсе пыракан Югослави правительстви тавра таччăнрах пĕтĕçме чĕнсе каланă. Çавăн пек калакан ораторсене митинга пухăннисем хĕрӳллĕн саламланă.

ИТАЛИРИ ХАЛĂХ ДЕМОНСТРАЦИЙĔСЕМ

БАРИ, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Барири радио çапла пĕлтерет: ĕнер социалистсемпе коммунистсен партийĕсем пуçарнипе пĕтĕм Италире халăх демонстрацийĕсем пулса иртнĕ. Демонстрантсем учредительнăй пухăва часрах пухма ыйтнă. Милан хулинче социалистсен партийĕн лидерĕ Ненни тата коммунистсен партийĕн лидерĕ Пальмиро Тольятти сăмах тухса каланă. Тольятти çапла каланă: Италин чи малтан хăйĕн вăйĕпе яланхи пек пурăнма пуçламалла. Учредительнăй пухăва часрах пухмалла. Ку вăл—пирĕн право. Кирек мĕн пулсан та, учредительнăй пухăва суйламалли куна васкаса палăртса хумалла, эпир суйлава хатĕрленнине пурте пĕлсе тăччăр.

Ненни хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: хальхи йывăрлăхсене халăх учредительнăй пуху пухса çеç татса пама пултарать. Правительствăн суйлав кунне палăртса хумалла, тенĕ.

Неапольри демонстрацире халăх ирĕклĕх комитечĕн членĕ Розальдино Санторо сăмах тухса каланă, унтан республиканецсен партийĕн, итальянец хĕрарăмĕсен союзĕн, кĕрешӳ партийĕн, социалистсен тата коммунистсен партийĕсен представителĕсем сăмахсем тухса каланă. Коммунистсен партийĕ ячĕпе Амендола каланă, вăл реакцие учредительнăй пухăва часрах пухсан çеç çĕнтерме пулни çинчен каланă. Социалистсен партийĕн представителĕ Сандро Пертини учредительнăй пухăва часрах пухма ыйтмалли çинчен каланă.

Çавăн пек демонстрацисем Римра, Флоренцире, Болоньяра тата Италири ытти пысăк хуласенче те пулса иртнĕ.

АРГЕНТИНĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 15-мĕшĕнче Аргентина президенчĕ Фаррель генеральнăй прокурора Альвареса çĕнĕ правительство туса хума хушнă. Фаррель Альвареса шалти ĕçсен министрĕ пулма сĕннĕ. Альварес çапла каланă: правительствăн ытти министрĕсене те лартма хамах ирĕк парсан, правительство тума килĕшетĕп, тенĕ. Çакăн хыççăн Фаррель Альвареса правительствăн ытти членĕсене те суйласа лартма хушнă. Çав правительствăра халиччен çаксем çеç пулнă: çар министрĕ Авалос генерал тата тинĕс-çар министрĕ Верненго Лима вице-адмирал.

Демократиллĕ ушкăнсем сĕннин пĕр пайне пурнăçа кĕртсе, правительство çĕршыва лăплантарма хăтланать. Авалос коммунистсен партийĕн лидерне Кадовильяна ирĕке кăларни çинчен пĕлтернĕ. Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, правительство учительсемпе профессорсене çĕнĕрен вырăна лартнă. Çав вăхăтрах правительство çар министрĕ пулса ĕçленĕ Перон майлă тăракан çынсене нумайĕшне, çав шутра ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн помощникне Морена та, вырăнтан кăларнă. Верховнăй суд хушнă тăрăх, Аргентина правительстви Перона хирĕç пынă пĕр паллă судьяна ирĕке кăларнă та хăйĕн вырăнне лартнă тата пичет ирĕклĕхне çĕнĕрен пурнăça кĕртесси çинчен пĕлтернĕ. Анчах, апла пулсан та, Аргентина университечĕн ректорĕсен совечĕ çапла каланă: эпир влаçа верховнăй суд аллине партарассишĕн малашне те кĕрешетпĕр, тенĕ, хальхи правительство «диктатурăн çĕнĕ тапхăрĕ» çеç пулса тăрать, тенĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат корреспонденчĕ Кортези ĕнер Буэнос-Айресран çапла пĕлтернĕ: демократиллĕ организацисем çар правительствине, вăл халăх хăйне пулăштăр тесе тĕрлĕ майлă хăтланать пулин те, ырламаççĕ. Демократиллĕ координаци совечĕ, ĕçсем мĕнле пулса пынине сăнамашкăн, вĕçĕмсĕр лару тăвать. Темиçе хаçат полицие наказани пама ыйтнă.

Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, радикалсен партийĕн лидерĕсем, çав шутра провинцисенчи чылай представительсем, çапла каланă: правительство тăвас ыйтăва татса памалли пĕртен-пĕр май вăл—Фаррель влаçа верховнăй суд аллине пани пулса тăрать, тенĕ. Радикалсен партийĕ хăйĕн членĕсене çак хальхи правительствăпа пĕрле ĕçлеме тата вăл тунă кирек мĕнле йĕркепе те килĕштерсе ĕçлеме чарнă.

США-ри ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Штатсен ĕç министрĕ Швелленбах нефть промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисемпе нефть компанийĕсем хушшинчи хирĕçĕве татса парайман хыççăн халь пĕр эрне ĕнтĕ горняксемпе çĕркăмрăк промышленникĕсем хушшинчи хирĕçĕве татса пама хăтланать, анчах та унăн ĕçĕ ăнăçмасть.

Забастовкăна 200.000 горняк хутшăннă.

Нью-Йорк хулин мэрĕ Ла Гардиа та Нью-Йоркри забастовка тăвакан грузчиксемпе предпринимательсене килĕштерме хăтланнă, анчах унăн та ĕç тухман. Грузчиксем—хамăр ыйтнине пурнăçа кĕртиччен ĕçе тухмастпăр, тесе каланă. Предпринимательсемпе калаçма вĕсем уйрăм комитет суйлама йышăннă, профсоюз председателĕпе Райанпа урăх калаçас мар, тенĕ, мĕншĕн тесен Райан предпринимательсемпе вăрттăн калаçса таталма хăтланнă.

АНГЛИРИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 15-мĕшĕнче Англири доксенче ĕçлекенсен забастовкинче кăшт улшăнусем пулнă. Лондонра забастовка тăвакансен пĕр пайĕ ĕçлеме пуçланă, тепĕр пайĕ вара октябрĕн 18-мĕшĕнче ĕçе тытăнма йышăннă. Провинцисенчи доксенче ĕçлекенсем хăйсен требованийĕсемпе килĕшмечченех забастовка тума йышăннă.

Çарсене куçарас ĕçе тĕрĕслекен офицер çапла каланă: доксенче ĕçлекенсем забастовка тума пăрахиччен Палестинăран, Египетран, Мальтăран тата Гибралтартан пĕр карап та килес çук тата Англирен те пĕр карап та тухса каяс çук.

Ливерпульпе Биркенхедри рабочисем хăйсен требованийĕсене йышăниччен забастовка тума пăрахмастпăр тесе калаçса таталнă. Вĕсем октябрĕн 18-мĕшĕнче пулмалли калаçу результачĕсене кĕтеççĕ. Çав портсене пырса ларнă 19 карапа халĕ салтаксем пушатаççĕ.

Мидлсборри 900 рабочи забастовка тума пăрахнă, иртнĕ эрнере вĕсем 40 карапа пушатма тытăннă.

Гулльре темиçе пин салтак ĕçлеççĕ. Вĕсем карапсем çинчен тырă пушатаççĕ.

Саут-Шилдсре салтаксем апат-çимĕç тиесе килнĕ карапсене пушатма тытăннă.

США КОНГРЕСĔН ЧЛЕНĔ МЭНСФИЛД КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 16-мĕшĕ (ТАСС). Америка конгресĕн членĕ Мэнсфилд (Монтан штатĕнчен суйланнă демократ) представительсен палатинче çапла каланă: Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи политика пирĕн паллă мар, тенĕ; вăл США-на хăйĕн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене Китайран илсе тухма сĕнмĕ. Китайра, Индире, Бирмăра, Корейăра хĕçпăшаллă вăйсем тытса тăма сăлтав çук, — тенĕ вăл,—Азири тинĕс-çар чаçĕсене çĕнĕ вăйсем яни пĕтĕмпех вырăнсăр, мĕншĕн тесен США-н хăйĕн вăйĕсене унтан часрах илсе тухма тăрăшмалла.

Россия контроллесе тăракан Маньчжурире, темиçе уйăх хушши революцилле юхăм пыракан Синьцзянре, Америка морякĕсене илсе пынă çар карапĕсем тăракан Шаньдунпа Хэбэйра, хăйĕн пуласлăхĕ паллă мар Гонконгра тата ытти нумай вырăнсенче те революцилле юхăма сасартăк вăйлатса ямалли майсем нумай. Мэнсфилд çапла каланă: США-н хĕçпăшаллă вăйĕсем Китайра мĕн чухлĕ нумайтарах тăрĕç, США-па Китайăн шалти ыйтăвĕсене татса парас ĕçе хутшăнтармалли майсем çавăн чухлĕ ытларах пулĕç, тенĕ.

Мэнсфилд малалла çапла каланă: Америкăн Китайри хĕçпăшаллă вăйĕсене ӳстерсе пыраççĕ, Циндао портне тинĕс çарĕсене антарни тата Чифу портĕнче 4 крейсер тăни США-шăн ак мĕн енчен хăрушă пулса тăчĕ: пĕрремĕшĕнчен, çавăн пирки вырăссем хăйсен çарĕсене Маньчжурирен Совет Союзĕпе Китай договорĕнче кăтартнă срокра (виçĕ уйăх хушшинче) илсе тухма килĕшмесĕр тăма пултарĕç; иккĕмĕшĕнчен, Китайра Гоминданпа коммунистсем хушшинче граждăн вăрçи пуçланса каяс пулсан, США, кам пĕлет, нейтралитет тытса тăрайман пулĕччĕ. Çакна асра тытас пулать: Шаньдунпа Хэбэй провинцийĕсем вырăссем оккупациленĕ Маньчжурирен инçе мар. Çав провинцисенче коммунистсем чылаях, вĕсем Мао Цзе-дунпа Чан Кайши пĕрле каласни мĕнпе пĕтнине пăхмасăрах малашне те уйрăм пурăнма шутлама пултараççĕ. Мэнсфилд малалла çапла каланă: Америкăн тинĕс çарĕсене Китай çĕрĕ çине антарни тата Америка крейсерĕсене Цийу хулине яни Китай ĕçĕсене хутшăнни пулать, çакна Чан Кай-ши ырлать пулин те, эпир, çавăн пек туса, пысăк йăнăш тăватпăр, тесе шутлатăп эпĕ, тенĕ.

ВИСБАДЕНРА НИМĔÇСЕН ВĂРÇА ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ СУД ТУСА ПĔТЕРНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Германин Америка çарĕсем оккупациленĕ зонинче, Висбаден хулинче, нимĕçсен вăрçă преступникĕсене суд туса пĕтернĕ. Кунта Хадамарти психиатрически больницăра ĕçленĕ 7 нимĕçе суд тунă. Вĕсене 470 çынна—поляксемпе вырăссене вĕлернĕшĕн айăпланă. Айăпланаканнисенчен виççĕшне—больница начальникне Клейна, Руов врача тата унăн ассистентне Виллиса вĕлермелле суд тунă. Руовпа Виллиса çынсене наркăмăш парса вĕлернĕшĕн айăпланă. Больница врачне Вальман доктора ĕмĕрлĕхе каторгăна ямалла, канцеляри начальникне Нерклене 35 çул тĕрмере хупса усрамалла, вилĕсене пытарнă командăн начальникне Блюма 30 çуллăха каторгăна ямалла, старши сестрана Хубера 25 çуллăха каторгăна ямалла суд тунă.

АВСТРИРЕ ФАШИСТЛА ПРЕСТУПНИКСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ

ВЕНА, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Венăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Австрири государство полицийĕ темиçе паллă фашиста арестленĕ. Вĕсене республикăна хирĕç тунă преступленисемшĕн айăплаççĕ.

Çапла, Санкт-Пельтенре пĕр Генрих Рейндль ятлă çынна арестленĕ. Вăл фашизма хирĕç кĕрешекенсене вĕлерессине организацилекенсенчен пĕри пулнă.

Çавăн пекех тата Фердинанд Зохе эсэсовеца арестленĕ. Вăл Кремс коменданчĕ пулнă. Нимĕç çарĕсем пĕр сăмахсăрах парăннине майăн 7-мĕшĕнчех пĕлнĕ пулин те Зохе, Хĕрлĕ Çара чăрмав кӳрес тесе, Дунай урлă хывнă икĕ тимĕр-бетон кĕпере сирпĕнтерсе яма хушнă. Çав кĕперсенчен пĕрне Хĕрлĕ Çар чаçĕсем нумаях та пулмасть юсаса пĕтернĕ. Çавăн пекех тата Санкт-Пельтенри округри суд председателĕ пулнă Зедника, суд следователĕ пулнă Грандауэра арестленĕ. Вĕсем фашизма хирĕç кĕрешекенсене тискеррĕн асаплантарнă.

Хальцбургра Венăри 17-мĕш çар округĕн коменданчĕ пулнă Нейман майора арестленĕ. Нимĕç çарĕсем Австри столицинчен тухса кайнă чухне Нейман Стефан светуйăн соборне вут тивретсе яма хушнă. Çавăн пекех Нейман Вена хулинчи ытти çуртсене аркатнăшăн та айăплă.

Арестленисене пурне те çитес вăхăтрах Вена хулинче халăх сучĕ суд тумалла.

АНГЛИ БАНКНЕ НАЦИОНАЛИЗАЦИЛЕССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНĂН ПРОЕКЧĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин финанс министрĕ Дальтон общинăсен палатине Англи банкне национализацилесси çинчен калакан законăн проектне тăратнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабсельнорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 02429. Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф 6. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.